25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1942 АПРЕЛЬ 15 ЮНКУН 88(6023) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Отечественнăй аслă вăрçă заемĕ

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемне кăларнă. Çĕнĕ заем ку таранччен кăларнă заемсенчен чылай енчен уйăрăлса тăрать. Ăна иртнĕ çулти заемсенчен нумайрах — 10 миллиард тенкĕлĕх кăларнă. Вăл икĕ кăларăмран — выигрышлă тата процентлă кăларăмсенчен тăрать. Выигрышлă кăларăма хуласенчи тата ялсенчи халăх хушшинче, процентлă кăларăма колхозсемпе промысла артелĕсенче сармалла. Çĕнĕ заемăн тĕллевĕ те каличченхи заемсенчен урăхларах. Унăн тĕллевĕ — «нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан вăрçăпа çыхăнса тăракан мероприятисем валли укçа-тенкĕ парса тăма çĕнĕ средствăсем хутшăнтарасси».

Вăрçă вĕçĕ-хĕррисĕр хĕçпăшалсем, ытларах та ытларах апат-çимĕçсем, çĕнĕрен те çĕнĕ резервсем ыйтать. Çак хĕçпăшалсене туса кăларма, апат-çимĕçсене парса тăма, резервсене хатĕрлеме сахал мар тăкак тухать. Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемне çырăннин укçи вăрçă тăкакĕсене витме каять те ĕнтĕ. Унсăр пуçне заема çырăннин укçи халăх хуçалăхне вăйлатма, культурăна ӳстерме каять.

Пирĕн халăх хаяр фашистла пусмăрçăсене пĕтерсе тăкассишĕн, каллех мирлĕ пурнăçпа пурăнма тытăнассишĕн кĕрешет. Пирĕн халăхпа государствăн ĕмĕчĕсем, интересĕсем пĕр пек. Çавăнпа ĕнтĕ ĕççыннисем СССР Совнаркомĕ Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемне кăларни çинчен пĕлтерекен хыпара хавхаланса кĕтсе илчĕç, пысăк çĕкленӳпе çырăнма тытăнчĕç. Çакă вара совет халăхĕпе государствин пĕрлĕхне кăтартакан тепĕр демонстраци пулса тăчĕ.

Çĕнĕ заема вырнаçтарас ĕç пирĕн Чăваш республикинче те хăватлăн сарăлса кайрĕ. Предприятисенчи, учрежденисенчи, колхозсенчи ĕççыннисем çĕнĕ заема пурте пĕр çын пек пулса çырăнаççĕ.

Социализмла çĕрĕçĕнче тӳрĕ кăмăлпа тăрăшса ĕçлекенсем Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемне пиншер тенкĕлĕх çырăнаççĕ. Çĕмĕрле районĕнчи «Новая жизнь» колхоз председателĕ Матвеев юлташ çĕнĕ заема 5.000 тенкĕлĕх, ферма заведующийĕ З. Кузнецов юлташ 3.500 тенкĕлĕх, бригадирсем Т. Спиридонов, Т. Ефитров юлташсем 3-шер пин тенкĕлĕх, колхозницăсем А. Макарова, О. Антонова тата Ф. Краснова юлташсем 2-шер пин тенкĕлĕх çырăннă.

Рабочисемпе служащисем заема вырнаçтарас ĕçе активлăн хутшăнаççĕ. Вĕсем ку ĕçе «Заема уйăхри ĕçукçи чухлĕ çырăнар!» текен лозунг тăрăх туса пыраççĕ. Чылай предприятисемпе учрежденисенче ĕçлекенсем халĕ заема уйăхри ĕçукçинчен ытларах та çырăнаççĕ. Уполнаркомзагăн республикăри конторин коллективĕ уйăхри ĕçукçи фончĕн 150 процентне чухлĕ çырăннă.

Партипе совет организацисен, финанс органĕсен задачи — çакăн пек паха тĕслĕхсене йышлăлатасси, ĕççыннисен мĕнпур массине заем çырăнас ĕçе хутшăнтарасси пулать.

Заема вырнаçтарас ĕçĕн ăнăçлăхĕ уйрăм çынсем пысăк суммăлăх çырăннинчен мар, вăл ĕçе пур ĕççыннисем те хутшăннинчен, кашниех уйăхри ĕçукçи чухлĕ çырăннинчен килет. Çак задачăна массăллă ăнлантару ĕçне анлăн туса пырсан кăна лайăх пурнăçлама пулать. Халĕ сăмах тата пичет пропагандипе вирлĕн усă курмалла. Агитаторсемпе пропагандистсен Сталин юлташ хăйĕн историллĕ сăмахĕсенче кăларса тăратнă задачăсене пурнăçа кĕртес ĕçре çĕнĕ заем мĕн таран пулăшни çинчен ăнлантарса памалла. Çавăнпа пĕрлех агитаторсем ĕççыннисене заема кăларнин условийĕсемпе тата ăна çырăнмалли йĕркесемпе тĕплĕн паллаштармалла.

Заем кампанин ăнăçлăхĕ заема вырнаçтарнипе пĕрлех укçине çийĕнчех пухни татса парать. Ялсенче подписка укçине пухас ĕçе заем сарнă вăхăтрах тытăнмалла. Ку тĕлĕшпе республикăри малта пыракан колхозсем лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Чкаловски районри «Маяк» колхоз членĕсем заема 100 пин тенкĕлĕх çырăнса, укçине çийĕнчех 96 пин тенкĕ тӳленĕ. Кун пек тĕслĕхсене йышлăн илсе кăтартма пулать.

Заем кампанине ăнăçлăн ирттерес ĕçре профсоюз организацисем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Вĕсен ĕççыннисем хушшинче заем сарас ĕçре комсодсене активлăн пулăшса тăмалла. Ку тĕлĕшпе рабочисемпе служащисен ретĕнчен заем сарас ĕçĕн организаторĕсене уйăрмалла.

Совет Правительстви мĕнпур рабочисене, служащисене, колхозниксене Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемне çырăнса илме чĕнет. Тăван çĕршывăн патриочĕсем, çĕнĕ заема пурте çырăнса илсе, çĕршывпа фронта кирлĕ укçа-тенке çитерĕхлех парар, фашистла пусмăрçăсене тĕппипех пĕтерсе тăкма тăван Хĕрлĕ Çара пулăшар!

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

Ленинград фронтĕнчи войскăсем 1942 çулти апрелĕн 1-мĕшпе 10-мĕш хушшинче тытса илнĕ трофейăсем

ЛЕНИНГРАД фронтĕнчи войскăсем апрелĕн 1-мĕшпе 10-мĕш хушшинче противникăннe çакăн пек трофейăсем **ТЫТСА ИЛНĔ**: танксем—8, орудисем—23, минометсем—43, пулеметсем—177, танксене хирĕç пемелли пăшалсем—27, автоматсем—170, пистолетсем—148, винтовкăсем—855, пулеметсен запасри стволĕсем—92, радиостанцисем—3, мотоциклсем — 10, снарядсем — 5.283 тата снарядсем хунă 70 ещĕк, минăсем—11.269 тата минăсем хунă 250 ещĕк, гранатăсем—2.600 ытла тата гранатăсем хунă 94 ещĕк, ракетăсем—1.500, тар—10 ещĕк, взрыв тумалли япаласем—7 ещĕк, винтовка патронĕсем—1.683 пин тата патронсем хунă 60 ещĕк. Кунсăр пуçне боеприпассен 2 складне, япаласемпе продовольствин 3 складне, телефон аппаратурине, стереотрубасем, дальномерсем, бензин тултарнă пичкесем, йĕнерсем, шинельсем, плащ-палаткăсем тата ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕсем тытса илнĕ.

Çав вăхăт хушшинче нимĕçсен 76 самолетне, 6 танкне, 19 орудине тата артиллерин пĕр батарейине, 13 минометне тата минометсен 5 батарейине, 14 пулеметне, 50 ытла автомашинине, боеприпассен склачĕпе горючи складне, оборона пункчĕсене, блиндажсене, огневой точкăсене нумай **ПĔТЕРСЕ ТĂКНĂ**.

Апрелĕн 1-мĕшпе 10-мĕш хушшинче Ленинград фрончĕн районĕнче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 9.000 çын ытла вилсе пĕтнĕ.

СОВЕТ ИНФОРМАЦИ БЮРОВĔ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Апрелĕн 13-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Апрелĕн 13-мĕшĕнче фронтăн хăшпĕр участокĕсенче пирĕн войскăсем наступленилле çапăçусем туса пынă тата халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ.

Апрелĕн 12-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 8 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 3 самолет пĕтнĕ.

Баренц тинĕсĕнче пирĕн суднăсем противникăн транспортне тата тральщикне путарнă.

* * *

Апрелĕн 12-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен пехотăпа грузсем турттарса пыракан 25 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 20 лавне, 8 полевой тата зенитнăй орудине, 9 минометне, зенитнăй пулеметсен 13 точкине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, противникăн пехотине 2 ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Иртнĕ эрне хушшинче, апрелĕн 5-мĕшĕнчен пуçласа 11-мĕшне çитиччен, нимĕçсен авиацийĕ 322 самолет çухатнă. Пирĕн çав вăхăт хушшинчех 68 самолет пĕтнĕ. Пĕр уйăх хушшинче, мартăн 11-мĕшĕнчен пуçласа апрелĕн 11-мĕшне çитиччен, нимĕçсен авиацийĕ 1.103 самолет çухатнă. Пирĕн çав вăхăт хушшинчех 314 самолет пĕтнĕ.

* * *

Чистяков юлташ командир пулса ертсе пыракан гвардейски часть (Калинин фрончĕ), противника хирĕç хаяррăн çапăçса, нимĕçсен 5 орудине, 21 пулеметне, 58 грузовой машинине, 2 çăмăл машинине, пĕр тягачне, боеприпассем тиенĕ 16 лавне, минометсен 2 батарейине тата 20 блиндажне пĕтерсе тăкнă. Çапăçу хирĕнче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсен 1.160 вилли выртса юлнă. Противникăн тылне кĕрсе кайса, гвардеецсем боеприпассен тата продовольствисен склачĕсене взрыв туса сирпĕнтерсе янă.

* * *

Андреев юлташ командир пулса ертсе пыракан подразделенири боецсем (Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕ), темиçе танк пулăшнипе, тăшмана кĕтмен çĕртен пырса çапса, халăх пурăнакан питех те кирлĕ пункта йышăнса илнĕ. Тыткăна илнисем пур тата трофейăсем тытса илнĕ. Халăх пурăнакан çав пунктшăн пынă çапăçура нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 150 çынна яхăн пĕтнĕ.

* * *

Иевлев юлташ командир пулса ертсе пыракан пирĕн часть (Хĕвеланăç фрончĕ) хаяр çапăçу хыççăн противник оборонин пĕр рубежне йышăнса илнĕ. Нимĕçсем чылай пысăк çухатусем тӳснĕ. Çапăçу хирĕнче 10 пулемет, 10 автомат тата нумай винтовкăсем пуçтарнă. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Кĕçĕн лейтенант Сергиенко хăйĕн танкĕпе нимĕçсен тылне пĕр систермесĕр кĕрсе кайнă, унтан каялла çаврăннă та, питех те пысăк хăвăртлăхпа противник артиллерийĕн позицийĕсем çинче ыткăннă. Танк пусеницисемпе таптаса тата персе нимĕçсен 6 орудине пĕтерсе тăкнă. Танк хыççăн кĕрсе кайнă пирĕн автоматчиксем нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 100 çынна яхăн пĕтерсе тăкнă.

* * *

Красноармеец Евсеев юлташ нимĕçсен минометне тытса илнĕ те çав минометран çавăнтах тăшман çине 200 мина ытла кăларса янă. Паттăр боец питех те тĕл пенипе тăшман миномечĕсен 2 батарейине, противникăн темиçе вуншар салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Белоруссире кĕрешекен Батя юлташăн тата З. юлташăн партизанла отрячĕсем нимĕç захватчикĕсене хăюллăн аркатаççĕ. Мартăн 15-мĕшĕнчен пуçласа апрелĕн 1-мĕшне çитиччен партизансем нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 768 çынна, 13 автомашинине пĕтерсе тăкнă, 9 дзот, пĕр кĕпер тата боеприпассен 3 складне взрыв туса сирпĕнтерсе янă. 10 офицера тата 3 полицейские тыткăна илнĕ.

* * *

Нимĕçсен 10-мĕш армейски корпусĕнчи охраннăй командăн 3-мĕш взводĕнчен тыткăна лекнĕ салтак Генрих Прис çапла каласа панă: «Мана çара илни нумаях пулмасть. Унччен эпĕ çар заводĕнче ĕçлеттĕм. Нимĕç войскисем фронтра пысăк çухатусем тӳснине пула, Гитлер халĕ çара пысăк квалификациллĕ рабочисене те, инженерсемпе конструкторсене те илет. Çапла, сăмахран, эпĕ ĕçленĕ заводра питех те кирлĕ, улăштарма та май çук тенĕ пек 12 специалистран 9 специалиста çара илчĕç. Квалификациллĕ рабочисем çинчен нимĕн калаçмалли те çук. Вĕсене ушкăнĕ-ушкăнĕпех фронта хăвалаççĕ. Заводсенче юлакан рабочисем те йывăр ĕçпе халран тухаççĕ. Хĕрарăмсене пулин те умлă-хыçлă икшер смена ĕçлеттереççĕ. Рабочисем хушшинче фашистла режима курайманни ӳссех пырать».

* * *

Гитлерăн войскисем Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче йывăр çухатусем тӳснине пула, нимĕçсен çарĕнчен салтаксем тарасси вăйланса кайнă. Польша, Белоруссия, Украина, Литва, Латвия тата Эстония территорийĕсенче çавăн пек тарса кайнă нимĕç салтакĕсем нумай. Вăрмансенче пытанса пурăнса, вĕсем Германи çарĕн продовольствипе япала склачĕсем çине тапăнаççĕ, вĕсене çаратаççĕ. Март уйăхĕн вĕçĕнче Биалла районĕнче (Польша) тата Ионава районĕнче (Литва) дезертирсен ушкăнĕ карательнăй отрядсене аркатса тăкнă. Дезертирсене хирĕç кĕрешме нимĕçсен командованийĕн моторизованнăй уйрăм отрядсем тума лекет.

Апрелĕн 14-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Апрелĕн 14-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле фронтра нимĕнле паллă улшăнусем те пулман.

* * *

Калинин фронтĕнчи участоксенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн чаçсем противник çирĕплетнĕ пункта туртса илнĕ. Ялăн урамĕсенче тата ялтан тухмалли вырăнсенче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 900 çынна çити вилсе юлнă. Пирĕн чаçсем нимĕçсен 8 орудине, 15 пулеметне, минометсен батарейине, 2 танкне пĕтерсе тăкнă, 8 блиндажа унти пулеметсен тата орудисен расчечĕсемпе пĕрлех аркатса тăкнă. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче противникăн тылĕнче çапăçакан пирĕн пĕр чаçăн боецĕсем пĕр кун хушшинче нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене 200 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Соколов юлташ командир пулса ертсе пыракан подразделенири артиллеристсем противник пулемечĕсен 11 точкине, 3 противотанковăй орудине пĕтерсе тăкнă, 3 блиндажа тата наблюдательнăй пункта çĕмĕрнĕ.

* * *

Красноармеец Морозов юлташ боевой задание пурнăçа кĕртнĕ чухне ун çине нимĕç салтакĕсен ушкăнĕ тапăннă. Гитлеровецсем ăна тыткăна илме хăтланнă. Хăюллă боец винтовкăран персе 12 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен ытти салтакĕсем каялла чакнă.

* * *

Связистсем—старшина Ползычев тата красноармеец Коплев юлташсем çак кунсенче нимĕçсен «Ю-88» йышши самолечĕн экипажне тыткăна илнĕ, çав экипажăн çĕр çине ирĕксĕрех анса лармалла пулнă.

* * *

Калинин фронтĕнче нимĕç войскисен тылĕнче çапăçакан партизансен отрячĕ, пĕр ялта вăйлăн çапăçса, нимĕçсен 160 салтакпа офицертан тăракан гарнизонне пĕтерсе тăкнă. Партизансем тăшманăн горючисемпе боеприпассен склачĕсене сирпĕнтерсе янă.

* * *

Румынин 2-мĕш дивизийĕнчи 31-мĕш полкăн 2-мĕш батальонĕнчен тыткăна парăннă капрал Ион Остеану çапла каласа панă: «Эпĕ хам ирĕкпех тыткăна парăнтăм, мĕншĕн тесен вырăссене хирĕç вăрçасшăн пулмарăм. Юлашки вăхăтра Румыни салтакĕсем хушшинче Румынин Арад ятлă хулине Венгри войскисем оккупацилени çинчен сăмах çӳреме пуçларĕ. Çавна май пирĕн патра венгерецсемпе çапăçса илчĕç. Юлашки çапăçусенче пирĕн батальон пысăк çухатусем турĕ. Мартăн 22-мĕш тĕлне 800 çынран 200 çынна яхăн çеç тăрса юлчĕ. Темиçе кун иртсен 30 çын тарса пытанчĕç».

* * *

Германири Крехельд хулинче пурăнакан Герд Б. нумаях та пулмасть нимĕç фельдфебелĕ Эрнст Штарнштраер патне çапла çырнă: «Çар предприятийĕсен нумай рабочийĕсене халĕ ĕнтĕ çара илнĕ, вĕсем халиччен отсрочкăпа усă курнă. Стефан Шерницпа Олис Барльгейна те илнĕ, вĕсене малтан çара илме юрăхсăр тесе йышăннă пулнă... Кунта пурте ĕлĕкхи пекех, пур çĕрте те кахаллăхпа витĕнсе саботаж тăваççĕ».

* * *

Колинра (Чехословакия) нимĕçсем чехсенчен, австриецсенчен тата нимĕçсенчен пухса йĕркеленĕ пехотнăй полк фронта кайассине хирĕç тăнă. Килес кунсенчех Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтне ярасси çинчен пĕлсенех, слатаксем нумайĕшĕ, уйрăмах чехсем тата австриецсем, тарса çухалнă.

* * *

Белоруссин нимĕçсем оккупациленĕ ялсенчен пĕринче пурăнакан ĕççыннисем Хĕрлĕ Çар валли питех те нумай парнесем пухнă. Парнесене тиенĕ 15 лава совет патриочĕсем фронт урлă каçарма тата пирĕн пĕр чаçри боецсене çитерсе пама пултарнă.

Цветной металлурги наркомачĕн çирĕп сплавсен Мускаври комбинатне Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăлани

Боеприпассем туса кăларас тĕлĕшпе Правительство панă заданисене кăтартуллăн пурнăçа кĕртсе пынăшăн СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх Цветной металлурги наркомачĕн çирĕп сплавсен Мускаври комбинатне Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăланă. (ТАСС).

Америка посолне В. Стендли господина В. М. Молотов юлташ йышăнни

Апрелĕн 13-мĕшĕнче Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ **В. М. Молотов** юлташ Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен ССР Союзĕнчи Чрезвычайнăй тата Полномочнăй çĕнĕ посолне В. Стендли господина йышăннă.

ТИМĔР-ТĂМĂР ПУХАÇÇĔ

ÇĔМĔРЛЕ. (**Хамăр корр.**). Районри комсомолецсемпе шкул ачисем çĕршыв валли тимĕр-тăмăр пухас ĕçе пысăк активлăхпа туса пыраççĕ. Вĕсем кăçал кăна вуншар тонна тĕрлĕрен тимĕр-тăмăр пухнă.

Потребсоюз енĕпе пĕрремĕш кварталта 47 тонна тимĕр-тăмăр пухмалла пулнă. Çакна ытлашшипех тултарнă. Уйрăмăнах Хутарпа Улхаш ялповĕсем лайăх ĕçлеççĕ. Вĕсем 9 тонна пухса, хăйсен обязательствисене ирттерсе пурнăçланă. Тимĕр-тăмăр пухас ĕç сарăлсах пырать. Апрелĕн малтанхи эрнинче кăна районĕпе 10 тонна ытла пухса государствăна панă.

Военнăй Заема çырăнса илсе, гитлерла бандитсене аркатас ĕçе хăвăртлатар!

Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Центральнăй Совечĕн Президиумĕ профсоюз организацийĕсем Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемне сарас ĕçе хутшăнасси çинчен йышăннă постановлени

ССР Союзĕн Правительстви йышăннă постановлени тăрăх Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемне кăларнă.

Государствăн Военнăй Заемне сарнинчен кĕрекен средствăсем гитлерла йыткĕтĕвĕсене хирĕç кĕрешнĕ çĕре, Совет Союзĕнчи халăхсен чыслăхĕпе ирĕклĕхне Германин фашистла захватчикĕсенчен хӳтĕлекен геройла Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс Çар Флотне тытса тăрса вĕсене хĕçпăшаллантарас тĕлĕшпе тухакан расходсем валли укçа-тенкĕ парса тăнă çĕре каяççĕ.

Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Центральнăй Совечĕн Президиумĕ, Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемне вырнаçтарса тухассине хуçалăхпа политика тĕлĕшĕнчен питех те кирлĕ задача вырăнне хурса, мĕнпур профсоюзсен центрти тата облаçсенчи комитечĕсене, фабрикăсемпе заводсенчи тата вырăнсенчи комитетсене, профсоюзăн мĕнпур активне çапла тума хушать:

1. Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемĕнчен кĕрекен средствăсем халăх хуçалăхĕн мĕнпур отраслĕсенче производствăна малалла ӳстерсе пынă çĕре, танксем, самолетсем, танксене хирĕç пемелли пăшалсемпе орудисем, тупăсем, минометсем, минăсем, снарядсем, винтовкăсем туса кăларас ĕçе ӳстернĕ çĕре, хамăрăн тăван Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс Çар Флотне çĕнĕ йышши хĕçпăшалсем, пур тĕрлĕ снаряженисемпе боеприпассем, обмундированипе продовольстви кирлĕ таранах парса тăнă çĕре кайни çинчен рабочисемпе служащисене анлăн ăнлантарса памалла.

2. Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемне предприятисемпе учрежденисенче, çавăн пекех тата мĕнпур халăх хушшинче сарас ĕçе туса ирттерме государство кредичĕпе перекет кассисене пулăшас тĕлĕшпе ĕçлекен комиссисене активлăн пулăшмалла, çавна туса пыма рабочисемпе служащисем хушшинчен заем çырăнтарас тĕлĕшпе ĕçлекен организаторсем уйăрмалла.

Рабочисемпе работницăсене, инженерсемпе техниксене, научнăй работниксене, врачсене, учительсене, искусство работникĕсене тата служащисене Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемне 3—4 эрнери ĕçукçи чухлĕ çырăнса илме сĕнес тата рабочисемпе служащисем заема пĕр уйăхри ĕçукçи чухлĕ çырăнса илес тĕлĕшпе хăйсен ирĕкĕпе кăтартакан пуçарулăха пур енчен те ырласа пулăшса пымалла.

3. Государствăн виççĕмĕш пятилетка (4-мĕш çулхи кăларăм) заемĕ тăрăх укçа тӳлесе татнă май, çав заемăн облигацийĕсене подписчиксене вăхăтра тата пĕтĕмĕшпех валеççе панине тĕрĕслесе тămалла.

* * *

Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Центральнăй Совечĕ мĕнпур рабочисемпе служащисене Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемне çырăнса илме чĕнет.

Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемне пурте пĕр шухăш-кăмăллă пулса çырăнса илсе, совет халăхĕ хăйĕн хăватлă пĕрлĕхне, ылханлă тăшмана аркатса тăкса çĕнтерме иксĕлми хатĕр тăнине тата вăя хĕрхенмесĕр ĕçленипе кăна мар, хăйĕн средствисемпе те фашистла вăрă-хурахсене çапса аркатса çĕнтерӳ тунă çĕре активлăн хутшăнма хатĕр тăнине, Совет Правительстви тата пирĕн юратнă çулпуç, полководец — ССР Союзĕнчи халăхсен ирĕклĕхĕшĕн пыракан вăрçин руководителĕ — аслă Сталин пирĕнтен мĕн тума ыйтнине пурне те тума хатĕр тăнине татах та тепĕр хут кăтартса парĕ.

Халăхăн хăватлă пулăшăвĕ

Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемне сарасси ăнăçлăн пулса пырать. Республикăри хуласемпе ялсенчи ĕççыннисем çĕнĕ заема питĕ пысăк хавасланăхпа çырăнса илеççĕ. Республикăра çĕнĕ заема пĕтĕмпе 23.177.000 тенкĕлĕх сарнă. Çакă вăл пирĕн халăх фронта хăватлăн пулăшса тăнине тепĕр хут кăтартса парать.

Заем сарас тĕлĕшпе Сĕнтĕр районĕ пуринчен те малта пырать. Кунта заема 1.816.000 тенкĕлĕх сарнă, укçине 1.255.000 тенкĕ пухнă. Хĕрлĕ Чутай районĕнче заема пĕр кун хушшинче 1.333.000 тенкĕлĕх сарса, укçине 1.032.000 тенкĕ пухнă. Вăрмар районĕнчи ĕççыннисем заема 1.515.000 тенкĕлĕх çырăннă, вăл шутран 903.000 тенкине перекет кассине куçарнă. Çавăн пекех Чкаловски, Калинински районсенче те заем сарас ĕç лайăх пырать. Шупашкар хулинчи ĕççыннисем Военнăй Заема 3.430.000 тенкĕлĕх çырăннă.

1.330.460 тенкĕлĕх сарнă

ЧКАЛОВСКОЕ. (**«Чăваш Коммуни» корр., телефонпа**). Заем сарас ĕç малаллах сарăлса пырать. Районĕпе пурĕ 1.330.460 тенкĕ çырăнса, 933.536 тенкĕ укçан тӳлесе татнă.

Ялхуçалăх вăтам шкулĕн коллективĕ заема пĕтĕмпе 8.080 тенкĕлĕх çырăннă. Вĕренӳ хуçалăхĕн заведующийĕ Корбаса юлташ çĕнĕ заема 1000 тенкĕлĕх çырăнса, 800 тенкине тӳлесе татнă. Шкул директорĕ Комиссаров юлташ 750 тенкĕлĕх çырăнса, 300 тенкĕ укçан тӳленĕ. Военнăй Заема шкулти вĕренекенсем те хавасланса çырăнаççĕ. Хасибсянов юлташ - 150 тенкĕ, И. Чернов—200 тенкĕ, Е. Александрова — 60 тенкĕ çырăнса, укçисене пĕтĕмпе тенĕ пекех тӳлесе татрĕç. Пĕрремĕш курсри заем уполномоченнăйĕ заем сарас тĕлĕшпе уйрăмăнах активлăн ĕçлерĕ.

Государствăн военнăй заемне сарас тĕлĕшпе массăллă-агитациллĕ ĕçе иртсе пыма ВКП(б) райкомĕ районри активе ялсовечĕсене ячĕ.

Çĕнĕ заем тухнипе пуçланса кайнă политикăллă çĕкленӳ колхозниксем хушшинче вăйланса пырать. Ку ĕçре, яланхи пекех, коммунистсемпе комсомолецсем паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. «Канаш» колхозăн председателĕ коммунист Макаров юлташ заема 4.000 тенкĕлĕх çырăнса укçине те çавăнтах тӳлесе татнă. Колхоз активĕ пĕтĕмĕшпе 9.000 тенкĕлĕх çырăнса илсе, укçине 7.000 тенкĕ хывнă. «Нариман» колхозăн председателĕ Закиров юлташ 3.000 тенкĕлĕх çырăнса, укçине çийĕнчех пĕтĕмĕшпех тӳлерĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем, районри мĕнпур ĕççыннисем заема пурте çакăн пек пысăк хавхаланупа çырăнаççĕ.

П. НИКОЛАЕВ.

КОЛХОЗ ПРЕДСЕДАТЕЛĔ МАТВЕЕВ ЮЛТАШ ÇĔНĔ ЗАЕМА 5000 ТЕНКĔЛĔХ ÇЫРĂННĂ

ÇĔМĔРЛЕ. (**Хамăр корр., телефонпа**). Партипе правительство 1942 çулти Военнăй Заема кăларма йышăннă постановление радио тăрăх илтсенех древкомбинат цехĕсенче ĕçлекен рабочисемпе служащисен митингĕсем пулса иртрĕç. Иккĕмĕш номерлĕ цехра пулса иртнĕ митингра паллă стахановец, социализмлă ăмăртăвăн отличникĕ М. Свиягин юлташ çапла каларĕ:

— Эпир тăван Хĕрлĕ Çара пур енлĕн те пулăшма хатĕр, çĕнĕ заем Хĕрлĕ Çара пулăшнă çĕре, тăшмана тĕп тунă çĕре каять. Çавăнпа эпир ăна пысăк хаваслăхпа çырăнса илетпĕр. Эпĕ государство кăларакан заемсене кашнинех пĕр уйăхри ĕçукçи чухлĕ çырăнса илнĕ. Кăçал 1942 çулти Военнăй Заема уйăхри ĕçукçинчен ирттерсе çырăнса илетĕп.

Митинг хыççăн рабочисем пысăк хавхаланупа заема çырăнса илме пуçларĕç. Инженерно-техническă работниксем пурте уйăхри ĕçукçи чухлĕ çырăнчĕç. Комсомолец мастер Анисимов юлташ уйăхри ĕçукçинчен ирттерсе — 900 тенкĕлĕх, стахановец Уточкин — 800 тенкĕлĕх, комсомолка-стахановка Большакова юлташ уйăхри ĕçукçин 139 процентне чухлĕ çырăнчĕç.

1942 çулти Военнăй Заема çырăнса илесси районри колхозсенче хĕрӳллĕн пырать. Колхозниксем правительствăн постановленине хĕрӳллĕн ырласа 1942 çулти Военнăй Заема пысăк хаваслăхпа çырăнса илеççĕ.

«Новая жизнь» колхоз членĕсем кĕске вăхăт хушшинчех çĕнĕ заема 35 пин тенкĕлĕхе яхăн çырăнса илчĕç. Уйрăм колхозницăсем А. Макарова, О. Антонова, Ф. Краснова юлташсем 2.000-шар тенкĕлĕх, МТФ заведующийĕ З. Кузнецов юлташ 3.500 тенкĕлĕх, колхоз бригадирĕсем Т. Спиридоновпа Т. Ефитров юлташсем 3000 тенкĕлĕх, колхоз председателĕ Матвеев юлташ 5.000 тенкĕлĕх çырăнса илчĕç.

«Лесной огонек» колхозри колхозниксем 1942 çулти Военнăй Заема 25.312 тенкĕлĕх çырăнса 25.000 тенкĕ укçине çавăнтах тӳлесе татрĕç. Хутарти Ленин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем 40.500 тенкĕлĕх çырăнса 35.000 тенкĕ укçине тӳлесе татрĕç.

Апрелĕн 14-мĕш тĕлне районри ĕççыннисем 1942 çулти Военнăй Заема 1.400.000 тенкĕлĕх çырăнса илнĕ, вăл шутран 226 пин тенкине çавăнтах тӳлесе татнă.

Х. ЛИСИН.

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн постановленийӗ

Питех те паларса тӑракан изобретенисемшӗн тата производствӑллӑ ӗҫӗн методӗсене тӗпрен ҫӗнетсе лайӑхлатнӑшӑн Сталинла премисем парасси ҫинчен

1941 ҫулти питех те паларса тӑракан изобретенисемшӗн Сталинла премисем парасси ҫинчен Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ 1939 ҫулти февралӗн 20-мӗшӗнче тата 1942 ҫулти январӗн 11-мӗшӗнче йышӑннӑ постановленине пурнӑҫа кӗртес майпа ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ ҫапла йышӑнать:

Питех те паларса тӑракан изобретенисемшӗн Сталинла премисем ҫаксене памалла тӑвас:

Пӗрремӗш степеньлӗ премисем—150.000 тенкӗлӗх

1. Анатолий Петрович **Александрова**, ССР Наукӑсен Академийӗн физико-технически институчӗн профессорне, Игорь Васильевич **Курчатова**, Вадим Робертович **Регеле**, Борис Александрович **Гаева**, Петр Григорьевич **Степанова** тата Владимир Максимович **Тучкевича** — ҫав институтӑн сотрудникӗсене, Борис Елизарович **Годзевича**, 2-мӗш ранглӑ инженер-капитана, тата Илья Васильевич **Климова**, 3-мӗш ранглӑ инженер-капитана, карапсене хӳтӗлемелли ҫӗнӗ мелсене шухӑшласа кӑларнӑшӑн.

2. Борис Павлович **Асеева**, 2-мӗш ранглӑ военинженера, Михаил Григорьевич **Марголина**, 3-мӗш ранглӑ военинженера, Исаак Харитонович **Невяжские** тата Лев Матвеевич **Фингӑ**, 3-мӗш ранглӑ военинженера, оборона ӗҫӗнче пысӑк пӗлтерӗшлӗ ҫӗнӗ электрорадио прибор шухӑшласа кӑларнӑшӑн.

3. Николай Александрович **Астрова**, 37-мӗш номерлӗ заводӑн главнӑй конструкторне, ҫӗнӗ типлӑ танксем конструкцине туса хатӗрленӗшӗн.

4. Александр Александрович **Волкова**, 66-мӗш номерлӗ заводӑн инженер-конструкторне, самолетсем валли ҫӗнӗ типлӑ [illegible] туса хатӗрленӗшӗн.

5. Сергей Владимирович **Ильюшина**, Социализмлӑ Ӗҫӗн Геройне, самолетӑн ҫӗнӗ конструкцине туса хатӗрленӗшӗн.

6. Андрей Григорьевич **Костикова**, Социализмлӑ Ӗҫӗн Геройне, Василий Васильевич **Аборенкова**, артиллери генерал-майорне, Иван Исидорович **Гвайа**, 3-мӗш ранглӑ военинженера, Владимир Николаевич **Голковские**, ҫӗнӗ типлӑ [illegible] туса хатӗрленӗшӗн.

7. Андрей Александрович **Липгарта**, Горькири Молотов ячӗпе тӑракан автомобильсем тӑвакан заводӑн главнӑй конструкторне, ҫӗнӗ типлӑ танкӑн конструкцине туса хатӗрленӗшӗн.

8. Овсиам Юльевич **Магидсона**, Пӗтӗм Союзри химипе фармацевт ӗҫӗсен наукӑпа тӗпчев институчӗн директор заместительне, химико-терапевтически препаратсем пӗтӗҫтерсе хатӗрленӗшӗн тата вӗсене туса хатӗрлес ӗҫӗн технологине урӑхлатса йӗркеленӗшӗн.

9. Александр Александрович **Микулина**, социализмлӑ Ӗҫӗн Геройне, Михаил Романович **Флесские**, 24-мӗш №-лӗ заводӑн главнӑй конструктор заместительне, авиаци моторӗн ҫӗнӗ конструкцине туса хатӗрленӗшӗн.

10. Александр Иванович **Морозова**, Михаил Ильич **Кошкина** тата Николай Алексеевич **Кучеренкӑна**, 183-мӗш номерлӗ заводӑн инженер-конструкторӗсене, ҫӗнӗ типлӑ вӑтам танкӑн конструкцине туса хатӗрленӗшӗн.

11. Владимир Александрович **Никитина**, ЦКБ—17 главнӑй инженерне, Федот Евдокимович **Бесполова**, Генрих Алиевич **Гасанова**, Николай Никитич **Иосина**, Анатолий Иоффович **Маслова**, Борис Соломонович **Фрумкина**, ЦКБ—17 конструкторӗсене, боевой карапсен проекчӗсене туса хатӗрленӗшӗн.

12. Федор Федорович **Петрова**, Алексей Николаевич **Булашева**, 172-мӗш заводӑн конструкторӗсем пулнӑскерсене, Виктор Акимович **Ильина** тата Сергей Петрович **Гуренкӑна**, 172-мӗш номерлӗ заводӑн конструкторӗсене, артиллерин ҫӗнӗ типлӑ хӗҫпӑшалӗсене туса хатӗрленӗшӗн.

13. Евгений Георгиевич **Рудяка**, Георгий Петрович **Волосатова**, Евгений Васильевич **Синильщикова**, 232-мӗш номерлӗ заводӑн инженерӗсене, Михаил Яковлевич **Крупчатникова**, Социализмлӑ Ӗҫӗн Геройне, техникӑллӑ войскӑсен генерал-майорне, тата Алексей Александрович **Толочкова**, 371-мӗш номерлӗ заводӑн опытлӑ ӗҫ секторӗн начальникне, тинӗс артиллерийӗн ҫӗнӗ типлӑ хӗҫпӑшалне туса хатӗрленӗшӗн.

14. Сергей Гаврилович **Симонова**, 614-мӗш номерлӗ заводӑн конструкторне, танксене хирӗҫ пемелли пӑшала туса хатӗрленӗшӗн.

15. Борис Георгиевич **Чиликина**, ЦКБ—4 главнӑй инженерне, Виктор Владимирович **Ашика**, Александр Яковлевич **Барсукова**, Борис Яковлевич **Гнесина**, Яков Михайлович **Мацкина**, Василий Иванович **Неганова**, Леонид Викторович **Тагеева**, ЦКБ—4 конструкторӗсене тата Сергей Федорович **Формаковские**, 212-мӗш номерлӗ заводӑн главнӑй конструкторне, боевой карапсен проекчӗсене туса хатӗрленӗшӗн.

16. Борис Иванович **Шавырина**, ОКБ НИИ—13 начальникне, Георгий Дмитриевич **Ширенина** тата Евгений Александрович **Ягупова**, ОКБ НИИ—13 работникӗсене, миномётсен конструкцине туса хатӗрленӗшӗн.

17. Аркадий Дмитриевич **Швецова**, Социализмлӑ Ӗҫӗн Геройне, авиаци моторӗн ҫӗнӗ конструкцине туса хатӗрленӗшӗн.

18. Борис Гаврилович **Шпитальныя**, Социализмлӑ Ӗҫӗн Геройне, авиаци валли ҫӗнӗ типлӑ оборудованийӗ шухӑшласа кӑларнӑшӑн.

19. Александр Сергеевич **Яковлева**, Социализмлӑ Ӗҫӗн Геройне, самолетӑн ҫӗнӗ конструкцине туса хатӗрленӗшӗн.

Иккӗмӗш степеньлӗ премисем—100.000 тенкӗлӗх

1. Иван Александрович **Аристова**, 222-мӗш номерлӗ заводӑн главнӑй конструкторне, тата Дмитрий Иванович **Елагина**, 174-мӗш номерлӗ заводӑн конструкторне, танксем валли ҫӗнӗ типлӑ хӗҫпӑшал шухӑшласа кӑларнӑшӑн.

2. Дмитрий Филиппович **Босса**, 381-мӗш номерлӗ заводӑн фрезеровщикне, хӑй туса хатӗрленӗ ҫӗнӗлле приспособленисемпе усӑ курса тата [illegible] хатӗрӗсене тӗрӗс майлаштарса металран япаласем касса кӑларас ӗҫӗн методне туса лайӑхлатнӑшӑн тата ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстернӗшӗн.

3. Иван Степанович **Бурмистрова**, 3-мӗш ранглӑ военинженера, ҫӗнӗ типлӑ боеприпассем туса хатӗрленӗшӗн.

4. Александр Васильевич **Вишневские**, наукӑсен тава тивӗҫлӗ деятельне, А. М. Горький ячӗпе тӑракан Пӗтӗм Союзри экспериментальнӑй медицина институчӗн хирурги клиникин руководительне, [illegible] шухӑшласа кӑларнӑшӑн.

5. Евгений Николаевич **Генинштене**, 631-мӗш номерлӗ заводӑн главнӑй конструкторне, Владимир Фларонтович **Пестрякова** тата Виктор Израилевич **Аппеле**, ҫав заводри ӗҫлекен инженерсене, самолетсем валли ҫӗнӗ типлӑ аппаратури туса хатӗрленӗшӗн.

6. Андрей Александрович **Гершуна**, Исидор Борисович **Левитина**, Государственнӑй оптически институчӗн научнӑй сотрудникӗсене, маскировка методӗсене шухӑшласа кӑларнӑшӑн.

7. Владимир Николаевич **Гусева**, 13-мӗш номерлӗ наукӑпа тӗпчев институчӗн лаборатори начальникне, Павлин Павлович **Лебедева** тата Анатолий Степанович **Чашкина**, ҫав институтра ӗҫлекен старши инженерсене, [illegible] ӳстерес методне шырса тупнӑшӑн.

8. Василий Алексеевич **Дегтярева**, Социализмлӑ Ӗҫӗн Геройне, 2-мӗш номерлӗ заводӑн главнӑй конструкторне, танксене хирӗҫ пемелли пӑшал туса хатӗрленӗшӗн.

9. Александр Иосифович **Забегина**, 3-мӗш номерлӗ заводӑн конструкторне, ҫӗнӗ типлӑ боеприпассем туса хатӗрлес ӗҫе йӗркелесе производствӑна кӗртсе пынӑшӑн.

10. Владимир Сергеевич **Зайкова**, Государствӑн 42-мӗш номерлӗ Пӗтӗм Союзри наукӑпа тӗпчев институчӗн лаборатори руководительне, Николай Алексеевич **Богословские**, ҫав институтрах ӗҫлекен научнӑй сотрудникне, химилле ҫӗнӗ йышши продукт шухӑшласа кӑларнӑшӑн.

11. Соломон Семенович **Канфора**, 13-мӗш номерлӗ наукӑпа тӗпчев институчӗн лаборатори начальникне, Яков Вульфович **Вайнера**, Александр Пантелеймонович **Давыдова**, Василий Дмитриевич **Николаева**, Рафаил Рафаилович **Сыромятникова**, Эмик Яковлевич **Воловельские**, Эмик Яковлевич **Смирнова**, Евгений Владимирович **Урнса**, Николай Александрович **Смирнова**, Евгений Арсентьевич **Дрозда**, Алексей Андреевич **Тарасенкӑна**, Николай Михайлович **Чистова**, 13-мӗш номерлӗ наукӑпа тӗпчев институчӗн инженерӗсене, пемелли хӗҫпӑшалсен тӳсӗмлӗхне ӳстермелли метода шырса тупнӑшӑн.

12. Сергей Тимофеевич **Кишкина**, авиаци материалӗсен Пӗтӗм Союзри институчӗн научнӑй чаҫӗн начальник заместительне, Николай Митрофанович **Склярова**, ҫав институтрах ӗҫлекен работнике, авиаци валли броня туса хатӗрленӗшӗн.

13. Александр Назарович **Кузнецова**, Ленинградри горнӑй институтӑн профессорне, Александр Николаевич **Сидорева**, профессора, Александр Федорович **Вайполина**, ҫав институтрах ӗҫлекен доценте, Станислава Ивановна **Черноусовӑна**, Пӗтӗм Союзри алюминиево-магниевӑй институтӑн инженерне, взрыв тумалли ҫӗнӗ йышши япаласем шухӑшласа кӑларнӑшӑн.

14. Николай Александрович **Лунина**, Томск чугунҫулӗ ҫинчи Новосибирск станцийӗн деповӗнче ӗҫлекен пӗрремӗш класри машиниста, паровозсене ӗҫлеттермелли меслете тӗпрен ҫӗнетсе лайӑхлатнӑшӑн, ҫав меслет паровозсем пӗр талӑкра кайма пултарассине тата паровозсен службин срокне чылай ӳстерме май парать.

15. Владимир Иосифович **Меркина**, Виктор Владимирович **Грибкова**, Государствӑн Пӗтӗм Союзри 42-мӗш номерлӗ наукӑпа тӗпчев институчӗн конструкторӗсене, оборона ӗҫӗнче пахаланакан йышши тӑракан аппарат туса хатӗрленӗшӗн.

(Малалли ҫитес номерте пулать).

Лей нимӗҫ халӑхне хӑратать

ЖЕНЕВА, апрелӗн 13-мӗш. (ТАСС). Гитлерӑн министрӗсем юлашки вӑхӑтра ҫӗршыв тӑрӑх ҫӳреме тытӑнни фашистсен пуҫлӑхӗсем Германи тылӗн шухӑш-кӑмӑлӗ пирки шикленнине кӑтартать. Ҫакна палӑртмалла: Гитлерӑн министрӗсем халӗ ӗнтӗ пухусенче урӑхла сасӑпа калаҫаҫҫӗ. Халӗ ӗнтӗ вӗсем ӳкӗтлемеҫҫӗ, ытларах та ытларах питлеме те хӑратма пӑхаҫҫӗ. «Германири ӗҫ фрончӗ» текенскерӗн руководителӗ Лей «Ангрифф» хаҫатра пичетленнӗ хӑйӗн статьинче Германи халӑхне тем пекех тарӑхса ҫырать. «Халӑх вӑл ача пек, — тесе ҫырать Лей. — Ачана шантарма ҫӑмӑл, анчах вӑл ҫав вӑхӑтрах йӑлӑнтарать те тата итлемест, ҫапла пире сахал мар тарӑхтарать. Ача аллине ҫӗҫӗ, шӑрпӑк тата инкек кӳме пултаракан ытти япаласем парас пулмасть». Лей нимӗҫсене вӗсем «шанмаҫҫӗ, ырӑ сунмаҫҫӗ, час-часах харкашма пӑхаҫҫӗ» тесе питлет, «халӑхра авалхи уйрӑмлӑхсем, хирӗҫӳсем палӑрма тытӑнчӗҫ» тесе ҫырать.

Кун хыҫҫӑн Лей уҫҫӑнах нимӗҫ халӑхне хӑратма тытӑнать. Гитлерла парти, тет вӑл, «кашни нимӗҫе сӑнать. Мӗнле усал шухӑш палӑрать, сисӗнет — кашнинех ҫырса пырать. Эпир уйрӑм ҫынсене, вӗсем хӑйсем хуть те кам пулччӑр, вӗсене совесть умӗнче е турӑ умӗнче ответ тытатпӑр тесе, фюрер умӗнче тытмалли ответлӑхран пӑрӑнса юлма ирӗк памастпӑр».

Журналистсем ҫакна асӑрхаттараҫҫӗ: Лей хӑйӗн статьине Германийӗн тӗп центрӗсенче ҫӳресе таврӑннӑ хыҫҫӑнах ҫырнӑ-мӗн. Кунта илнӗ сведенисем тӑрӑх, промышленноҫлӑ чылай хуласенче Лее рабочисем калама ҫук сиввӗн кӗтсе илнӗ, хӑшпӗр вырӑнсенче Гитлера хирӗҫле вӑйлӑ выступленисем ан пулччӑр тесе, полицирен те пулӑшу илме тивнӗ.

Германи промышленноҫӗнчи саботаж

СТАМБУЛ, апрелӗн 12-мӗш. (ТАСС). Пӗлекен ҫынсем каланӑ тӑрӑх, Германи промышленноҫӗнче каллех саботажсем пулнине палӑртнӑ. Линц хулинчи винтовкӑсемпе пулеметсем тӑвакан заводра рабочисем кӑмрӑк ҫине темӗнле япала хушнӑ. Ҫакӑн хыҫҫӑн вара заводӑн вӑй паракан хуҫалӑхӗ пӗтӗмпех ӗҫлеме чарӑнса ларнӑ. Завода 8 кунран тин ӗҫе янӑ. Саботаж палӑрнӑ хыҫҫӑн нумай рабочисене арестленӗ. Ҫакнашкал саботажсем пулнине кӳршӗри ытти заводсенче те палӑртнӑ.

Англи авиацийӗ Рур, Ҫурҫӗр Итали тата Гавр ҫине вӗҫсе пырса тапӑнни

ЛОНДОН, апрелӗн 13-мӗш. (ТАСС). Англин авиаци министерстви кӑларнӑ коммюникере ҫапла каланӑ: апрелӗн 13-мӗш ыран тенӗ чух ҫӗрле Англи бомбардировщикӗсен йышлӑ отрячӗ Рур облаҫӗн промышленноҫлӑ районӗ ҫине ҫӗнӗрен вӗҫсе пырса вӑйлӑн тапӑннӑ. Кунсӑр пуҫне бомбӑсем Ҫурҫӗр Италири тӗрлӗрен объектсем ҫине, Гаврти доксем ҫине тата противникӑн Франципе Голландири аэродромӗсем ҫине пӑрахнӑ.

Ҫурҫӗр Италире бомбӑсем, пӗтӗмӗшпе илсен, пуринчен ытла Турин ҫине пӑрахнӑ. Ҫав тапӑну противник пачах та кӗтмен ҫӗртен пулса иртнӗ. Туринра Фанспа Ансальдӑн пысӑк завочӗсем пур.

Индин национальнӑй конгресс исполкомӗн резолюцийӗ

ЛОНДОН, апрелӗн 12-мӗш. (ТАСС). Рейтер агентстви Делирен Индин национальнӑй конгресс исполкомӗ Англин ҫар кабинечӗ Криппс урлӑ панӑ сӗнӳсем ҫине ответлесе йышӑннӑ резолюци ҫинчен пӗлтерет.

Хӑйӗн резолюцийӗнче исполком: Индин национальнӑй конгресӗ вӑрҫӑ пуҫланнӑранпах Инди халӑхӗ тӗнчери прогрессивнӑй вӑйсем ҫумне хутшӑнма хатӗрри ҫинчен пӗлтернӗ, тесе палӑртнӑ. Вӑл ҫак йывӑр вӑхӑт мӗн тума хушнисене пӗтӗмпех тума хатӗр, анчах та вӑл ҫавсене Индие ирӗклӗх парсан кӑна тӑвӗ. Англи правительствин сӗнӗвӗсем, тенӗ резолюцире, Индие вӑрҫӑ ӗҫӗсем пӗтнӗ хыҫҫӑн кӑна влаҫа хӑй аллине илме ирӗк параҫҫӗ. Ҫитменнине тата Индийӗн малашлӑхӗ мӗнле пуласси ҫинчен калакан ҫав сӗнӳсем «ирӗклӗ нациллӗ пӗр правительство тӑвас ӗҫре, демократиллӗ государство тӑвас ӗҫре пысӑк чӑрмав пулса тӑраҫҫӗ». Исполком уйрӑмӑнах Англи сӗнӗвӗсенче учредительнӑй пухӑва мӗнле суйламалли ҫинчен, тӗрлӗ провинцисен прависем ҫинчен калакан вырӑнсемпе килӗшмест, Инди княжествисем пӗр-пӗринчен уйрӑлма пултараҫҫӗ тесе каланисене хирӗҫлет, ун пек туни Индие саплаласа яма пултарать, тет исполком.

Исполком резолюцийӗ чи малтанах самоуправленийӗн паянхи форми ҫинчен калаҫма ыйтать. Анчах та «Англин ҫар кабинечӗн сӗнӗвӗсенче,—тенӗ резолюцире,—паянхи форма ҫинчен каланисем тӗтреллӗ тата вӗсем пачах ҫителӗксӗр. Унта Индийӗн халӑхӗн вӑхӑтри йӗркене тӗпрен улӑштармалли ҫинчен пӗр сӑмах та каламан».

Исполком Англин сӗнӗвӗсенче Индие хӳтӗлес ӗҫӗн руководстви мӗнле пулмалли ҫинчен каланисене йышӑнмасть, ҫав руководство Индин нациллӗ правительстви аллинче пулмалла тесе ҫине тӑрсах ыйтать.

«Оборона ӗҫӗнчи руководствӑна нациллӗ правительство аллинчен туртса илнӗ,—тенӗ резолюцире,—вӑл нациллӗ правительство рольне пӗчӗклетет, йӑна [illegible] кулли туса хӑварать».

Юлашкинчен резолюцире ҫапла каланӑ: конгресс халех ирӗклӗ нациллӗ правительство тума, Инди оборонине ертсе пырас ӗҫе нациллӗ правительство аллине пама ыйтать; ҫав пӗртен-пӗр тӗп ыйтӑва пурнӑҫламасӑр исполком Англин ҫар кабинечӗн сӗнӗвӗсене йышӑнма пултараймасть, тенӗ.

КРИППС АНГЛИЕ ТУХСА КАЯТЬ

ЛОНДОН, апрелӗн 12-мӗш. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчӗ Делирен панӑ хыпар тӑрӑх, Криппс хӑй Англие апрелӗн 13-мӗшӗнче тухса кайасси ҫинчен пӗлтернӗ.

Англия Японин Иранри миссине кӑларса яма ыйтать

ТАВРИЗ, апрелӗн 13-мӗш. (**ТАСС спецкорӗ**). Кунта пӗлтернӗ тӑрӑх, ҫак кунсенче Англин Тегеранри миссийӗ Иран правительствинчен Японин Иранри миссине кӑларса яма ыйтнӑ. Кунта шутланӑ тӑрӑх, англичансен ыйтӑвне американецсем хута кӗреҫҫӗ, ҫавӑнпа та англичансен ыйтӑвне пурнӑҫа кӗртесси пулма пултарать. Кунта ҫӳрекен сӑмахсем тӑрӑх, Иран правительстви ҫак требованипе килӗшмесен, Иранпа Англи хушшинче пысӑк конфликт тухса кайма пултарать.

Япони Цейлон утравӗ ҫине тапӑнма хатӗрленни

ЛОНДОН, апрелӗн 11-мӗш. (ТАСС). Англин информаци министерстви пӗлтернӗ тӑрӑх, халӗ ӗнтӗ уҫҫӑнах ҫакӑ паллӑ пулса тӑнӑ: Пирл Харбор ҫине тапӑннӑ чухне ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗме пултарнӑ тактика Цейлон ҫине вӗҫсе пырса тапӑнма тӑрсан японецсен пӗтӗмпех путланса ларнӑ. Японецсем пысӑк ҫухатусем тӳснӗ. Вӗсенне 75 самолет, тен ытларах та пулӗ, пӗтерсе тӑкнӑ е сиенленӗ. Кунта илнӗ сведенисем тӑрӑх, Японин ҫав сывлӑшри тапӑнусене хутшӑннӑ самолечӗсен базисем пурин те авианосецсем ҫинче пулнӑ.

Бенгали заливӗнче англичансен «Дорсетшейр» тата «Корнуэлл» крейсерӗсене путарнӑ хыҫҫӑн англичансен «Гермес» авианосецне Тринкомалирен кӑнтӑр еннерехре юхса выртакан шывсенче путарнӑ. Крейсерсене те, авианосеца та японецсен пикировка тӑвакан самолечӗсем путарнӑ.

Ҫакӑн пек шутлама май паракан сӑлтавсем пур: японецсем Англин Азири флотне вӑл японецсене Цейлона йышӑнма тата Индие кӗрсе кайма чӑрмантараймин пуличченех ҫӗмӗрсе тӑкма васкаҫҫӗ. Кунта ҫитнӗ хыпарсем тӑрӑх, японецсем Рождество утравне тытса илнӗ. Ҫав утрав Яварӑн кӑнтӑралларах выртать, Мадагаскар ҫине хӗвелтухӑҫӗнчен наступлени пуҫласа ямалли лайӑх аванпост пулса тӑрать.

МАЛЬТА УТРАВӖ ҪИНЕ ТАПӐННИ

ЛОНДОН, апрелӗн 12-мӗш. (ТАСС). Мальта утравӗнчен илнӗ черетлӗ коммюникере ҫапла каланӑ: апрелӗн 11-мӗшӗнче японецсен авиацийӗ утрав ҫине икӗ хутчен нумай самолетсемпе вӗҫсе пырса вӑйлӑн тапӑннӑ. Ку тапӑнусене тӗрлӗ енчен туса иртернӗ. Бомбӑсене утрав гаванӗпе утраври аэродромсем ҫине пӑрахнӑ. Пӗр аэродром ҫине тата пулеметсенчен пенӗ.

Германи самолечӗ Лами форчӗ ҫине вӗҫсе пырса тапӑнни

ЛОНДОН, апрелӗн 12-мӗш. (ТАСС). Бритиш Юнайтед пресс агентстви ҫапла пӗлтерет: «Паризер цейтунг» хаҫатӑн сӑмахӗсем тӑрӑх, Германи самолечӗ Чад кӳлли районӗнчи де-голлевецсен аллинче тӑракан Лами форчӗ ҫине вӗҫсе пырса тапӑннӑ. Иртнӗ эрнере, каланӑ тӑрӑх, Германи самолечӗсем Конго ҫийӗнче вӗҫнӗ.

—о—

КӖСКЕН

● Англин истребителӗсем Ливи фронтӗнче иккӗмӗш хут наступлени тума тытӑннӑранпа, урӑхла каласан — 1941 ҫулти ноябрӗн 18-мӗшӗнчен пуҫласа, тӑшманӑн 300 самолетне персе ӳкернӗ. Кунсӑр пуҫне, тӗрӗсленмен даннӑйсем тӑрӑх, тата 100 самолета пӗтерсе тӑкнӑ, 200 самолета сиенленӗ.

● Бразили правительстви ҫак юлашки уйӑхсем хушшинче ҫара ҫар ӗҫне вӗрентсе ҫитерме татах та темиҫе ушкӑна илнӗ. Правительствӑн планӗсем тӑрӑх, Бразили ҫарӗн йышӗ 1.200.000 ҫынна ҫитмелле.

● Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсем Кубӑна ялхуҫалӑх строительствипе обществӑллӑ строительство валли кивҫен 25 миллион доллар укҫа панӑ.

● Францин наукӑсен Академийӗн 7 членне усӑ курма юраман литературӑна усранӑшӑн арестленӗ. Виҫӗ кун иртсен вӗсене «ирӗке кӑларнӑ» пек тунӑ, анчах та вӗсем килӗсене таврӑнман, вӗсем халь ӑҫта иккенне пӗлмеҫҫӗ. (ТАСС).

Совет Союзӗпе Япония нейтралитет ҫинчен пакт тунӑранпа ҫулталӑк ҫитрӗ

Апрелӗн 13-мӗшӗнче Совет Союзӗпе Япония нейтралитет ҫинчен пакт тунӑранпа ҫулталӑк ҫитрӗ. Ҫав пакта, Совет Союзӗн мирлӗ политикине кура, ҫак халь пыракан вӑрҫа малалла ытлашши сарса ярас мар шухӑшпа тунӑ. Ҫав пакта Японипе Совет Союзӗ хушшинчи ҫыхӑну вӑраххӑн аталанса пынӑ хыҫҫӑн тунӑ, ӑнланса илмешкӗн питех те ҫӑмӑл чӑнлӑха — Совет Союзӗ хӑйӗн интересӗсене никама та пӑсма ирӗк паман ҫӗршыв пулса тӑнине, ӑна ҫилентерни ахалех иртменнине ӑнланса илнӗ хыҫҫӑн тунӑ ҫав пакта. Пуриншӗн те ӗнтӗ паллӑ: Октябрьти революцирен пуҫласах Японипе Совет Союзӗ хушшинчи ҫыхӑнӑвӑн темӗн те пӗр тӳссе ирттерме тиврӗ (Японин Инҫетри Хӗвелтухӑҫӗнчи 1918—1922-мӗш ҫулсенчи интервенцийӗ, Ҫурҫӗр Сахалина тытса илни, Манчжурие тытса илни, Хасан шӳлли тата Халхин-Гол юханшывӗ ҫывӑхӗнчи районсенчи событисем тата ытти те). Ҫакӑн хыҫҫӑн ӗнтӗ Совет Союзӗпе Япония 1941 ҫулти апрель уйӑхӗнче нейтралитет ҫинчен пакт тунӑ пулсан, ҫакӑ вӑл вара Япони правительствине ертсе пыракан ушкӑнсем Совет Союзӗпе хирӗҫмесӗр, лӑпкӑ кӳршӗсем пек пурӑннине нимӗн те ҫитменнине ӑнланса илнине, фашистла авантюристсен хыҫӗнчен кайса Совет Союзӗпе татти-сыпписӗр хирӗҫсе пурӑнни ырӑ туманнине ӑнланса илнине пӗлтерет.

Иртнӗ ҫул пысӑк та тӑвӑллӑ ӗҫсем пулса иртрӗҫ, вӗсем нейтралитет ҫинчен пакт тӑвакан ҫӗршывсенчен иккӗшинчен те аякра тӑмарӗҫ. Германия, хӑй тунӑ договорсене пӑсса, Совет Союзӗ ҫине ултавлӑн тапӑнчӗ, Совет Союзӗнчи халӑхсен, вӑрӑ-хурахсемпе бандитсене Совет Союзӗн территорийӗ ҫине кӗме ӗмӗрлӗхех пӑрахтарас тесе, аллисене хӗҫпӑшал тытма тиврӗ.

1941 ҫулти ноябрӗн 25-мӗшӗнче Япония коммунистла интернационала хирӗҫле пакта тата пилӗк ҫуллӑха тӑснӑ ҫӗре хутшӑнчӗ. Ҫав пакт мӗнешкел агрессиллӗ пулни пуриншӗн те паллӑ ӗнтӗ. 1941 ҫулти декабрӗн 7-мӗшӗнче Японин войскисем кӗтмен ҫӗртен Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсемпе Великобританин тинӗс-ҫар базисем ҫине пырса тапӑнчӗҫ те, вара Лӑпкӑ океан ҫинчи вӑрҫӑ пуҫланса кайрӗ. Пӗлтӗр, декабрӗн 11-мӗшӗнче Япония, Германия тата Италия виҫҫӗшӗ ҫӗнӗ пакт, тройственнӑй пакт турӗҫ. Вӗсем пӗр-пӗрне Великобританипе Пӗрлешӳллӗ Штатсене хирӗҫ вӑрҫӑ пӗтиччченех пӗрле вӑрҫмалла тесе тата пӗр енлӗ килӗшӳ тумалла мар тесе сӑмах пачӗҫ. Ку ҫеҫ те мар—вӗсем вӑрҫӑра ҫӗнтернӗ хыҫҫӑн та «Тройственнӑй пакт картинчен» тухмасӑр, пурте пӗрле, питӗ те туслӑн ӗҫлеме сӑмах панӑ.

Ҫапла ӗнтӗ, Японипе Совет Союзӗ хушшинчи нейтралитет ҫинчен тунӑ пакт пысӑк йывӑрлӑхсем умӗнче тӑрать. Совет Союзӗпе Япония нейтралитет ҫинчен пакт тунӑранпа иккӗмӗш ҫулталӑка кӗнӗ самантра эпир ҫакна калама тивӗҫлӗ: тӗнчери лару-тӑру ҫавтери ҫивӗч те хӑйне евӗрлӗ пулса пырать пулин те, ҫав пакт ӑнӑҫлӑ пулчӗ тата вӑл хӑйӗн вӑйне халӗ те-ха ҫухатман. Вӑл чи малтанах акӑ мӗншӗн хӑйӗн вӑйне ҫухатман: Совет Союзӗ хӑй тунӑ килӗшӳсене нихӑҫан та пӑсмасть. Совет Союзӗпе Япония пулӑ тытас енӗпе тунӑ конвенцие пӗр ҫулталӑка тӑсма килӗшсе, Совет Правительстви Японипе йӗркеллӗ те ӗҫлӗ ҫыхӑну тытма, пӗр-пӗрин экономикӑллӑ интересӗсене шута илсе ҫыхӑну тытма хатӗр тӑнине кӑтартса пачӗ.

Нейтралитет ҫинчен тунӑ пакт малашне те пурӑнтӑр тесен, Япони енчен те договорсем ҫине Совет Союзӗ пек пӑхни кирлӗ. Договор тӑрӑх тума пулчисене пӗр пӑркаланмасӑр, мӗнле каланӑ ҫавӑн пек туса пымалла, пӗрре каласса татӑлнӑ ыйтусем ҫинчен калаҫса татӑлаймарӑмӑр-ха текелесе тӑни ан пултӑр. Японири фашистла ҫар ушкӑнӗсем, хӑйсен вӑрҫӑри ҫитӗнӗвӗсене пула пуҫӗсем ҫавӑрӑнса кайнӑскерсем, ҫурҫӗренчи захватчикла вӑрҫӑ ҫинчен сӳпӗлтетсе чи малтанах тата пуринчен ытларах Японие хӑйне сиен тума пултарнине ӑнланса илме тивӗҫлӗ.

Япония хӑй тума пулнисене пурне те тӗрӗс тата вӑхӑтра туса пырсан, тӗнчери лару-тӑру питӗ ҫивӗчленсе пынӑ ҫак тапхӑрта та Совет Союзӗпе Япони хушшинчи нейтралитет ҫинчен тунӑ пакт Японири халӑхсемшӗн те, Совет Союзӗнчи халӑхсемшӗн те хӑйӗн вӑйне ҫухатмӗ.

(«Правда», апрелӗн 13-мӗш).

Май уйӑхӗнчи ӑмӑрту

Обязательствӑсене ытлашшипех пурнӑҫлаҫҫӗ

ҪЕМӖРЛЕ. («Чӑваш Коммуни» корр.). Древкомбинатри утильцех коллективӗ Май уявӗ умӗнхи социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнса, апрель уйӑхӗнчи плана 110 процент тултарма обязательство илнӗ.

Цехри рабочисемпе работницӑсем халӗ хӑйсен обязательствисене ытлашшипех пурнӑҫласа пыраҫҫӗ. Апрелӗн малтанхи кунӗсенче цех коллективӗ хӑйӗн заданийӗсене 115—120 процент тултарса ӗҫленӗ.

Ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерес тӗлӗшпе примӗр кӑтартакансен хисепӗ йышланса пырать. Юлашки вӑхӑтра стахановкӑсем М. Гавриловӑпа Е. Павлова юлташсем куллен икшер ҫын тумалли ӗҫсене туса пыраҫҫӗ, стахановка А. Мурова, А. Лесина юлташсем нормӑна 185 процент таран, О. Пронина юлташ 200 процент тултараҫҫӗ.

Цехра ӗҫлекенсем Май уявне хӑйсен цехне тата килсуртсене культурӑллӑ сӑн кӗртнипе кӗтсе илеҫҫӗ.

Х. ЛИСИН.

ВӐРМАН ХАТӖРЛЕВӖ

Вӑрман хатӗрлес ӗҫ юлса пырать

СӖНТӖР. (Хамӑр корр.). Вӑрман хатӗрлес ӗҫӗн шутлӑ кунӗсем юлчӗҫ. Часах вӑрманти ҫулсем пӑсӑлаҫҫӗ. Ҫавӑнпа та халӗ кашни колхозӑн ҫак кӗске вӑхӑтпа туллин усӑ курса юлмалла, вӑрманта ӗҫлеме ҫителӗклӗ ӗҫ вӑйӗ памалла.

Ҫатракасси ялсоветне кӗрекен колхозсенчен пӗр «Пионер» колхозӑн кӑна плапа 950 кубометр хатӗрлемелле пулнӑ пулсан, хальхи вӑхӑта 680 кубометр ҫеҫ хатӗрленӗ.

Ку колхозран ӗҫлеме каякансем вӑрманта пӗр-икӗ кун ӗҫлеҫҫӗ те ытти 7—8 куна хӑйсем валли укҫа тума хӑтланса ирттереҫҫӗ. Кайран вара ут апачӗ е ҫӑкӑр пӗтрӗ тесе киле таврӑнаҫҫӗ. Муркаш ялсоветӗнчи «Авангард», Камаш ялсоветӗнчи «Свобода» колхозсем вӑрман хатӗрлес плана пӗр процент та тултарман.

Ҫакна колхоз руководителӗсем курса тӑраҫҫӗ пулин те, вӑрман хатӗрлес ӗҫе вӑйлатас тӗлӗшпе татӑклӑн нимӗн те тумаҫҫӗ.

Г. АКИМОВ.

—о—

ГРАНАТА ЫВӐТАКАНСЕН ӐМӐРТӐВӖ

Республикӑри чылай районсенче граната ывӑтакансен ӑмӑртӑвӗ пырать. Апрелӗн 5-мӗшӗнчен вара Улатӑр хулинче ӑмӑртӑва 972 ҫын хутшӑннӑ. Вӗсенчен 868-шӗ нормӑсем панӑ.

Ҫавӑн пекех Сӗнтӗрвӑрринче ӑмӑртӑва хутшӑннӑ 211 ҫынран 164-шӗ нормӑсем панӑ.

Т. КАРАСЕВА.

—о—

Автомашинӑсемпе Атӑл ҫинче ҫӳреме чарнӑ

Шывшур илнине хирӗҫ кӗрешес тӗлӗшпе ӗҫлекен хулари чрезвычайнӑй комиссин приказӗ тӑрӑх, апрелӗн 15-мӗшӗнчен пуҫласа автомашинӑсемпе тата тракторсемпе Атӑл ҫинче ҫӳреме чарнӑ.

—о—

Совет Союзӗ тӑрӑх

▲ Казахстанра хуласемпе ялсенче тасалӑх уйӑхлӑхӗ ирттереҫҫӗ. Алма-Атара, Джамбулра тата ытти хуласенче те массӑллӑ воскресниксем туса ирттернӗ.

▲ Бурят-Монголире кӑҫал сахӑр завочӗ тӑваҫҫӗ. Колхозсем кӑҫалхи ҫуркунне сахӑр кӑшманӗ акакан ҫӗр лаптӑкне 150 гектартан 1000 гектара ҫити ӳстереҫҫӗ.

▲ Башкири АССР Наркомлегпромӗ ҫӗнӗрен тӑватӑ сӑран завочӗ туса лартать. Вӗсем хром, юфть, патуш тирӗ туса кӑлармалла.

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЧУВАШСКИЙ СЕЛЬСКОХОЗЯЙСТВЕННЫЙ ИНСТИТУТ
объявляет на 1942-43 учебный год
ПРИЕМ СТУДЕНТОВ
на 1-ый курс агрономического и зоотехнического факультетов.
В Институт принимаются лица, имеющие среднее образование.
ДИРЕКЦИЯ.

Государственному Тресту НКЭП СССР ТРЕБУЮТСЯ:
плотники, каменщики, бетонщики, столяры, маляры, штукатуры, подсобники, уборщицы, курьеры и сторожа.
Общежитием и столовой обеспечиваются.
Обращаться по адресу: Кузнечная, 29, отдел кадров.
3—1.

СЛУЧНОЙ ПУНКТ при Чебоксарской Ветлечебнице временно закрыт. Случка коров будет производиться в дер. Заводская.

ТРЕБУЮТСЯ
главные и старшие бухгалтера для работы на периферии и ст. бухгалтера-ревизоры для работы в г. Чебоксарах.
Обращаться: гор. Чебоксары, ул. 15 лет Комсомола, д. № 2, к тов. Честнокову.
1—3.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, редакци секретарӗн—4—26, пропагандӑпа парти пурнӑҫ пайӗн — 5—31, ялхуҫалӑх пайӗн — 3—99, «Ленин ҫулӗпе» журналӑн тата комсомол пурнӑҫ пайӗн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 200. Ф. 6. 58 64 п: м: